Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

27 (7988) № * Юн кун, 2012 ҫулхи ака (апрель) уйăхĕн 11-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Ҫур аки умĕн

## Хатĕрленӳ ĕҫĕсем вăй илеҫҫĕ

Районти хуҫалăхсенче ҫур акине хатĕрленес ĕҫсем сарăлса пыраҫҫĕ. Ял хуҫалăх предприятийĕсемпе хресчен (фермер) хуҫалăхĕсенче ҫак кунсенче вăрлăх янтăласси, удобрени, топливо кӳрсе килесси, ял хуҫалăх техникине ответлă тапхăр валли юсаса хатĕрлесси ҫине пысăк тимлĕх уйăраҫҫĕ.

Районĕпе ака ĕҫĕсем валли 1162 тонна минераллă удобрени кирлĕ пулсан, ҫуррине ытла кӳрсе килнĕ ĕнтĕ. Ку енĕпе ăнăҫлă ĕҫлекенсем шутĕнче «Оринино», Ильич яч. хис., Суворов яч. хис. хуҫалăхсем, «Путь Ильича» агрофирма, «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество тата ыттисем.

Элита вăрлăх 12161 тонна туяннă. Пахалăхлă вăрлăх хатĕрлесси ҫине «Путь Ильича» агрофирмăра, «Восток», «Оринино», Чкалов яч. хис. хуҫалăхсенче, И.В. Петровăн, П.Ф. Серафимовăн, О.А. Аргандеевăн, В.В. Бархаткинăн хресчен (фермер) хуҫалăхĕсенче пысăк тимлĕх уйăраҫҫĕ.

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

Ҫитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă ҫитĕнӳсемшĕн тата нумай ҫул хушши тăрăшса ĕҫленĕшĕн район администрацийĕн 2012 ҫулхи апрелĕн 6-мĕшĕнчи 330 № йышăнăвĕпе «Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул» муниципаллă бюджет вĕрентӳ учрежденийĕн математикăпа физика учительне **Людмила Аркадьевна ФЕДОРОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Ырă ҫын ĕҫĕпе те илемлĕ

## Техĕмлĕ апат пĕҫереҫҫĕ



*Раҫҫей Федерацийĕ хăйĕн аталанăвĕнче ҫĕнĕрен те ҫĕнĕ программăсене ҫул парса пынă вăхăтра вĕрентӳ системи тĕп вырăн йышăнать. Ачасене вĕрентсе пурнăҫ ҫулĕ ҫине ăслă-тăнлă та ҫирĕп сывлăхлă кăларассине районти кашни вĕрентӳ коллективĕнчех ҫирĕп туяҫҫĕ.*

*– Пирĕн тĕллев – ачасемпе шкулта вĕрентекенсене техĕмлĕ те вĕри апатпа вăхăтра тивĕҫтересси. Ҫакă кашнийĕн сывлăхĕшĕн епле пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине эпир аван ăнланатпăр, – терĕҫ Ҫатракассинчи вăтам шкулти поварсем уроксем хушшинчи тăхтавра.*

*Эсир сăн ӳкерчĕкре Светлана Римовна Охотникова аслă поварпа (повар стажĕ 1986 ҫултанпа пулсан, Ҫатракассинчи вăтам шкулта – 21 ҫул) Алина Петровна Скворцова повара куратăр.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

*Чăваш Республикин Пуҫлăхĕн Указĕ*

## Чăваш Республикин саккунĕсен проекчĕсене халăхпа сӳтсе явасси ҫинчен

Нормативлă право документчĕсем тĕлĕшпе пурнăҫлакан ĕҫ-хĕле лайăхлатас тата Чăваш Республикин ĕҫ тăвакан влаҫ органĕсем Чăваш Республикин саккунĕсен проекчĕсене туса хатĕрленĕ чухне халăх шухăшне шута илессине тивĕҫтерес тĕллевпе ҫапла йышăнатăп:

1. Чăваш Республикин ĕҫ тăвакан влаҫ органĕсем хатĕрлекен Чăваш Республикин саккунĕсен проекчĕсене халăхпа сӳтсе явассине ирттересси ҫинчен калакан Положение (малалла – Положени) ҫирĕплетес.

2. Чăваш Республикин ĕҫ тăвакан влаҫ органĕсен: Чăваш Республикин хатĕрлекен саккунĕсен Положенипе килĕшӳллĕн халăхпа сӳтсе явма тивĕҫлĕ Проекчĕсен (малалла – проектсем) тексчĕсене Интернетри информаципе телекоммуникации сетĕнчи Чăваш Республикин влаҫ органĕсен Порталĕнчи официаллă сайтсене вырнаҫтарассине тивĕҫтермелле;

Проектсене халăхпа сӳтсе явнă ҫĕре хутшăнакансене халăхпа сӳтсе явнă вăхăтра илнĕ асăрхаттарусемпе тата сĕнӳсемпе паллашма майсем туса памалла.

3. Ҫак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыҫҫăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуҫлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2012, ака, 9, 36 №.

Апрелĕн 12-мĕшĕ – Космонавтика кунĕ

## Тĕнче уҫлăхĕ илĕртет

**Иртнĕ ҫул эпир этем тĕнче уҫлăхне – космоса ҫĕкленнĕренпе 50 ҫул ҫитнине паллă турăмăр. Кăҫал вара пирĕн ентеш Андриян Николаев тата Павел Попович тĕнчере пĕрремĕш хут «Восток-3» тата «Восток-4» крапсемпе ушкăнпа космосра вĕҫнĕренпе ҫур ĕмĕр ҫитнине паллă тума хатĕрленетпĕр. Ҫавна май ҫак паллă пулăмпа ҫыхăннă тĕрлĕ мероприятисем республикăра та, районта та сахал мар пулса иртеҫҫĕ.**

Акă нумаях пулмасть 13 районпа хуларан 60 ытла вĕренекен Ҫĕнĕ Шупашкар хулинче пухăннă. Кунта самолетсемпе вĕҫекен аппаратсен ăстисем ăмăртнă. Ăмăртăва хутшăннă 13 команда хушшинче призерсем шутне Муркашсемпе Тăвайсем тата Шупашкар хулин команди кĕме тивĕҫнĕ.

Юнкă шкулĕнчи И.В. Киршева ертсе пыракан ҫамрăк космонавтсен «Юнга» отрячĕн членĕсем харпăр хăйĕн моделĕсем тĕлĕшпе те чылай енĕпе палăрма пултарнă, малти вырăнсене йышăннă. Кусем вĕсем 6-мĕш класри Алексей Тепеев, Михаил Киршев, 3 «а» класри Даниил Андреев, 8-мĕш класри Игорь Шишокин, Дмитрий Ильин.

Ҫамрăк космонавтсен «Юнга» командин членĕсем грамотăсемпе медальсене тата хаклă парнесене тивĕҫнĕ. Команда вара хăйĕнпе пĕрле тăван района Раҫҫей Геройĕн, Н.М. Бударин летчик-космонавтăн куҫса ҫӳрекен кубокне илсе килнĕ.

Кĕскен

## Патшалăх пулăшать

«Агропромышленноҫ комплексне аталантарасси» наци проекчĕпе пăхнă патшалăх пулăшăвĕпе усă куракансем ял ҫыннисем хушшинче сахал мар. 2006–2012 ҫулсенче килти хушма хуҫалăх тытакан кашни 4-мĕш ҫын ҫăмăллатнă кредит илессипе патшалăх пулăшăвĕпе усă курнă. Пĕтĕмпе 618,6 миллион тенкĕлĕх 3852 кредит илнĕ. Ытларахăшĕ ку укҫа-тенкĕпе выльăх тытса усрамалли ҫурт-йĕре реконструкцилет, пĕчĕк калăпăшлă ял хуҫалăх техники туянать.

Кăҫалхи 3 уйăх хушшинче ҫăмăллатнă кредит 126 ҫын 26 миллион та 137 пин тенкĕлĕх илнĕ.

## «Ачасем тата ҫемье»

ЧР шалти ĕҫсен министрĕн ҫумĕн А.В. Тимофеевăн хушăвĕпе кăҫалхи апрелĕн 9-мĕшĕнчен тытăнса 15-мĕшĕччен ҫак ятпа пирĕн районта та оперативлă профилактика мероприятийĕсем ирттерме пăхнă. Ҫакă ăнсăртран мар. Юлашки вăхăтра республика территорийĕнче ҫул ҫитмен ҫамрăксем тĕлĕшпе тунă преступленисен шучĕ пĕчĕк мар. Хăйсен ҫул ҫитмен ачисем ҫине тӳнтерле витĕм кӳрекен, воспитани парас ĕҫрен пăрăнакан ашшĕ-амăшне тупса палăртса учета илĕҫ, саккун йĕркисене пăсакансене явап тыттарĕҫ.

Ҫырăнтару – 2012

### ХАКЛĂ ВУЛАКАНĂМ!

**Районти «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата июльтен илсе тăма малалла ҫырăнтараҫҫĕ. 6 уйăха ҫырăнмалли хак – 204 тенкĕ.**

**Вулакансене пĕлтернĕччĕ, июль уйăхĕнчен шăмат кунсенчи кăларăм хальхи пек 6 страницăпа мар, 8 страницăпа тухма пуҫлать.** **Райхаҫат редакцийĕ.**

## Главный приз вручен ОАО ГСК «Поддержка»




Деятельность ОАО Государственная страховая компания «Поддержка» (далее – ГСК «Поддержка») в 2011 году высоко оценена страховым сообществом: в марте текущего года компания признана Победителем V Поволжской национальной Премии в области страхования «Серебряный зонт» в основной номинации «Компания 2011». К многочисленным отечественным и международным наградам, которые имеет ГСК «Поддержка», добавился главный приз вышеупомянутой премии - «Лучшая региональная страховая компания».

Наряду с этим, компании во второй раз (впервые было в 2008 году) присвоено звание Лауреата Поволжской национальной Премии в области страхования «Серебряный зонт» в номинации «Информационно-открытая страховая компания».

Признание заслуг ГСК «Поддержка» стало для большого коллектива компании хорошим подарком к ее 20-летнему юбилею, который будет отмечаться в декабре 2012 года. И оно, действительно, заслуженно. Компания динамично развивается, ведет социально-ориентированный бизнес, предоставляет хозяйствующим субъектам и населению республики широкий перечень доступных страховых услуг высокого качества, обеспечивает необходимое страховое покрытие по приемлемой цене и высокий уровень обслуживания страхователей. С учетом их спроса, включая малообеспеченные слои населения, в ГСК «Поддержка» разрабатываются специальные страховые продукты. Наличие представительств компании во всех муниципальных районах и городах Чувашии приближает страховые услуги к их потребителям. Все вопросы, касающиеся взаимодействия компании со страхователями, в том числе и такие важные для них, как тарифы и урегулирование убытков, решаются в компании оперативно.

Компания занимает заметное лидирующее положение на региональном страховом рынке, обеспечивает ежегодный прирост количества договоров страхования, имеет высокие финансово-экономические показатели, профессиональный авторитет и хорошую деловую репутацию. Ее руководство и сотрудники искренне благодарны своим партнерам и клиентам за доверие и выбор в пользу ГСК «Поддержка».

С развитием рынка страхования, ростом конкуренции и ужесточением требований страхового надзора к деятельности страховщиков ГСК «Поддержка» с каждым годом становится все более информационно-открытой страховой организацией. Она присутствует в информационном поле на федеральном, межрегиональном, республиканском и муниципальном уровне, а официальное представление информации о компании обеспечивает ее сайт. Размещаемая в СМИ и на сайте информация об условиях и особенностях страхования в ГСК «Поддержка» предоставляет страхователям возможность получить ответы на возникающие у них вопросы и право выбора страховщика. Около 20 процентов информационных сообщений с упоминанием компании представляют собой благодарности страхователей в ее адрес. Обеспечение свободного доступа граждан к информации о деятельности компании способствует решению одной из важнейших государственных задач в части развития информационного общества.

ГСК «Поддержка» принимает активное участие на специализированных мероприятиях (семинары, круглые столы, выставки), посвященных вопросам страхования, а также в самых разных по тематике мероприятиях, проводимых на республиканском и муниципальном уровне. Стратегия деятельности компании строится с учетом развития экономики республики и в интересах ее жителей.

Таким образом, подробно ознакомившись с деятельностью ОАО ГСК «Поддержка», можно с уверенностью сказать, что на чувашской земле, действительно, работает лучшая региональная страховая компания, с которой надежно. Она рядом, чтобы помочь.

**З. ВОРОБЬЕВА, генеральный директор ГСК «Поддержка»**

# Ӳсĕмсем пур, ыйтусем те çук мар

Полици пайĕ: пĕрремĕш квартал итогĕсем

***Апрелĕн 9-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче анлă канашлу иртрĕ. РФ Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕн ĕçченĕсем хăйсен кăçалхи пĕрремĕш кварталти ĕçĕсен итогĕсене пĕтĕмлетрĕç. Канашлу ĕçне право сыхлавĕн районти ытти органĕсен ертӳçисем, район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, РФ Шалти ĕçсен министерствин республикăри уйрăмĕн штаб пуçлăхĕ А. Кожемяков полковник, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем хутшăнчĕç. Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕн пуçлăхĕ Е. ПЛЕЧОВ кăçалхи пĕрремĕш квартал итогĕсемпе паллаштарчĕ.***

Пĕтĕмĕшле илсен полицейскисен ĕçне лайăх енчен палăртмалла. Çакă Е. Плечов туса панă докладран та, уйрăмсен ертӳçисем тухса каланинчен те курăнать, А. Кожемяковпа Р. Тимофеев та çакна палăртрĕç. Апла пулин те кая хăвармасăр татса памалли ыйтусем те çук мар. Кун пирки те канашлура сăмах пулчĕ.

Полици пайĕн çĕнĕ тытăмне йĕркеленĕренпе çур çул ĕнтĕ. Пĕр следователь, уголовлă шырав ĕçченĕн тепĕр штатне чакарнă, патрульпе пост службин сотрудникĕсем те 33 çынран 20 юлнă, 16 ял тăрăхĕпе участоксенче 10 уполномоченнăя çирĕплетнĕ. «Пирĕн халĕ тĕп тĕллев – сахалрах йышпах хамăрăн ĕç-хĕле пахалăх енĕпе палăрăмлă çĕнĕ шая çĕклесси», – терĕ А. Кожемяков кун пирки.

Полицин участоксенчи уполномоченнăйĕсем пĕтĕмĕшле илсен хăйсен ĕçне лайăххатнине палăртрĕç канашлура. Апла пулин те вĕсем хушшинче хăйсен тивĕçне кирлĕ шайра туса пыманнисем те пур-ха. Пĕрлехи кăтартусем мĕнле пуласси вара кашни ĕçчен шанса панă ĕç участокĕнче ответлăха туйса вăй хунипе тӳрремĕнех çыхăннă. Ирĕкрен хăтарнă вырăнсенчен таврăннисен, условнă майпа айăпланисем, вăхăтран маларах ирĕке кăларнисем уйрăм учетра пулмалла. Вĕсене татах преступлени тăвас çул çине тăрассинчен асăрхасах тăмалла.

Общества вырăнсенче тата урамра тăвакан преступленисен шучĕ ӳсни палăрать. Апла пулсан вырăнсенчи оперативлă лару-тăрăва лайăхрах курса-пĕлсе тăни кирлĕ. Патрульпе пост нарядĕсен преступлени пулма пултаракан, криминалпа çыхăннă вырăнсенче тăтăшах пулмалла. Иртнĕ 3 уйăхра вара обществăлла вырăнсенче тунă преступленисене 11 (унччен 4 пулнă), урамра тунисене 7 (3 пулнă) регистрациленĕ.

Январь–март уйăхĕсенче 106 преступление уçса панă, 86 çынна уголовлă майпа айăпланă. Преступленисене уçса парасси 88,3 процентпа танлашать е пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 5,5 процент чакнă. Кун пек лару-тăрупа лăпланма юрамасть. Манма кирлĕ мар: уçса паман преступлени çавăн йышши татах тепĕр преступлени çуратма пултарать. Кунпа пĕрлех унччен уçса парайман преступленисем пирки те манмалла мар. Вĕсем те вĕçĕмех куç ытамĕнче юлмалла.

Çул çитменнисем хушшинче преступлени тăвас çул çине тăракансем пурри шухăшлаттарма тивĕç. Çавна май ку тĕлĕшпе профилактика мероприятийĕсем ирттерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ирĕклĕ халăх дружинисен ĕçне те лайăхрах йĕркелес пулать, ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе уйрăмшар ĕçлессине те практикăламалла. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ятарлă программăпа килĕшӳллĕн муниципаллă пĕрлешӳсенчи хăрушсăрлăха тивĕçтерме 3250 пин тенкĕ уйăрма пăхнине пĕлтерчĕ. Ирĕклĕ халăх дружинисем валли укçа-тенкĕ те уйăрма палăртаççĕ.

Канашлу пирки пĕтĕмлетсе çавна каламалла. Преступленисене уçса парассинче, вĕсене асăрхаттарассинче, обществăлла йĕркелĕхе тивĕçтерессинче иккĕмĕш пĕлтерĕшлĕ ĕç пулма пултараймасть. Ку тĕлĕшпе палăрнă лайăх енсене сыхласа хăварни, тупса палăртнă çитменлĕхсене пĕтерсе пыни кирлĕ. Чи малтанах вара кашнийĕнех хăйĕн должноçпа пăхнă тивĕçне чун туртнипе, ответлăха туйса пурнăçламалла.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Хушу

# Ку хутĕнче – 52-ĕн

***ЧР Министрсен Кабинечĕ 2012 çулхи апрелĕн 3-мĕшĕнче 170-р № хушу кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн республикăри граждансен татах тепĕр ушкăнне ĕç стажне кура «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят панине çирĕплетнĕ. Вăл шутран Муркаш районĕнчен:***

Авдеева Валентина Александровна (Шаптак)
Андреева Зоя Григорьевна (Исетерккĕ)
Барминова Раиса Аркадьевна (Москакасси)
Блинова Раиса Ильинична (Атапай)
Васильев Валерий Николаевич (Çатракасси)
Васильева Анна Тарасовна (Очăкасси)
Васильева Лариса Павловна (Макçикасси)
Вязов Геннадий Борисович (Муркаш)
Галкина Таисия Ивановна (Мулкачкасси)
Гордеева Сенклетия Сергеевна (Шаптак)
Грибова Людмила Анисимовна (Сыпай)
Григорьева Александра Потаповна (Анатри Панкли)
Григорьева Елена Васильевна (Шомик)
Дмитриева Альбина Ивановна (Платкасси)
Донскова Зинаида Георгиевна (Çатракасси)
Ершова Зоя Николаевна (Пĕрремĕш Май выççăлкки)
Ефимова Людмила Евстафьевна (Отарккă)
Звонкова Людмила Ивановна (Мемеккасси)
Землемерова Антонина Никитична (Ятман)
Иванов Анатолий Андреевич (Карманкасси)
Иванов Валериан Прохорович (Патаккасси)
Иванова Алевтина Егоровна (Оринин)
Игнатьева Валентина Ивановна (Платкасси)
Кириллова Раиса Ивановна (Мăн Шаптак)
Константинов Владимир Алексеевич (Çуткӳл)
Константинова Апелина Филипповна (Çуткӳл)
Лаптев Станислав Евграфович (Кăпас)
Максимова Раиса Михайловна (Анатри Панкли)
Мамаева Мария Васильевна (Иштерек)
Михайлова Людмила Леонидовна (Отарккă)
Николаева Дина Яковлевна (Çатракасси)
Овчинникова Нина Никифоровна (Шупуç)
Огадерова Галина Ивановна (Мăн Сĕнтĕр)
Орлова Нина Алексеевна (Нӳрет)
Парандеева Людмила Борисовна (Уйкас Хачăк)
Петрова Татьяна Ивановна (Лантăш)
Салтыкова Светлана Всеволодовна (Çулав)
Самакова Елена Кирилловна (Тушкасси)
Семенова Евдокия Никоноровна (Турикасси)
Сергеева Серафима Аркадьевна (Очăкасси)
Соловьева Галина Александровна (Çĕньял Муркаш)
Суханова Нина Александровна (Мăн Сĕнтĕр)
Терентьева Лилия Михайловна (Мăрсакасси)
Трофимов Владимир Игнатьевич (Ярапайкасси)
Тукмакова Валентина Ананьевна (Муркаш)
Фомина Валентина Степановна (Юнкă)
Хлебкова Галина Герасимовна (Çармăçкасси)
Шилова Галина Петровна (Шурча)
Яковлев Илья Яковлевич (Хурăнкасси)
Яковлева Римма Васильевна (Çатракасси)
Яндушкина Зоя Семеновна (Юнкăпуç)
Яшкова Раиса Федоровна (Кораккасси)

**Асăрхаттарни: «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ çӳлте асăннă граждансене удостоверенисене савăнăçлă лару-тăрура район администрацийĕнче апрелĕн 12-мĕшĕнче 13 сехетре параççĕ.**

# ГИБДД: аварилле лару-тăру

Çĕнĕлĕхсем

Патшалăх автоинспекцийĕ çул çинче пулнă аварисене палăртассин правилисене улăштарнă. Ведомствăра шантарнă тăрăх, çĕнĕлĕх водительсемшĕн лайăхрах: справка çине пичет пустарма патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцине кайса çӳремелле мар. Унччен страхлакан компанисем аварие пула кӳнĕ тăкака саплаштарма пичет лартнă справка ыйтнă. Страховщиксен шучĕпе вара çĕнĕлĕхе пула автотранспорт хуçисен пурнăçĕ йывăрланать кăна. Çитменнине малашне инспекторсен аварие пула автомашинăн пулнă курăнман ванчăкĕсене кăтартма юрамасть.

РФ патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕ çул-йĕр çинчи аварисем пирки справкăсем парассипе территори подразделенийĕсене методика рекомендацийĕсем ярса панă. Паллă ĕнтĕ, ку справкăна компенсаци тӳлевĕ пама страхлакан компанисем ыйтаççĕ. Инспекци пуçлăхĕн çумĕ Владимир Кузин ăнлантарса панă тăрăх, справкăсем çырассипе пĕрлехи йĕрке çук пирки водительсемпе страхователь-сем хушшинче пĕр-пĕрне ăнланманни палăрать.

Рекомендацисенче икĕ çĕнĕлĕх пур. Пĕрремĕшĕнчен, çул çинче инкек пулсан айăплине патшалăх автоинспекци сотрудникĕ палăртнă чухне аварие лекнисене инспекторăн кирлĕ справкăна вырăнтах памалла. Хальхи практикăра водительсен документа пичетпе çирĕплетмелле. Анчах пичет автоинспектор çумĕнче çук. Апла пулсан ГИБДД уйрăмне каясах пулать. Ку вара вăхăтпа çыхăннă. Кун пирки Кузин çапла ăнлантарса панă: «Водительсен подразделение кайса çӳреме кирлĕ мар, хăш-пĕр страховани компанийĕсене кун пек требованийĕсене законодательствăпа пăхса хуман». Инспекцие тата çакăн пирки пĕлтернĕ: енчен те страховщиксен документ чăнлăхĕ пирки иккĕленӳ çуралать пулсан, компани кирек хăш вăхăтра та патшалăх автоинспекцине запрос яма пултарать.

Иккĕмĕш çĕнĕлĕх авари пулнă хыççăн тупса палăртнă ванчăксене палăртассипе çыхăннă. Халиччен авари пулсан инспектор справкăра куçа курăнакан ванчăксене кăна мар, унсăр пуçне пулма пултаракан юсавсăрлăх е ванчăксем пирки те асăннă. Вĕсене автомашинăна сервисра тĕплĕн тишкернĕ хыççăн кăна палăртма май пур. Малашне инспекторăн кун пек правă çук. Авари пулнă хыççăн çырнă справкăна та кайран хушса çырнисем кĕртме юрамасть. Апла пулсан страховщиксем клиента автоинспекцие кайса справкăна хушса çырма пултараймаççĕ.

«Пулма пултаракан куçа курăнман ванчăксем» фраза ăçтан тупăннă-ха? Ĕçĕ акă мĕнре. Хăш-пĕр страховщиксем инспектор справкăра кăтартнă юрăхсăра тухнă детальсемшĕн кăна тӳлеççĕ. Гаишниксем ку фразăна çырса клиента тӳлев илес тĕлĕшпе проблемăсем пуласран страхланă. Халĕ ĕнтĕ страхлакан компанисем клиентсенчен хушма справкăсем ыйтма тытăнĕç е пачах тӳлеме килĕшмĕç. «Ним çук çĕртен çынсен пурнăçне йывăрлатма мĕн тума кирлĕ пулнă», – тĕлĕнет «РЕСО-Гаранти» пуçлăхĕн çумĕ Игорь Иванов. Унăн шухăшĕпе кун пек лару-тăру икĕ-виçĕ уйăхран ытла пымалла мар. Ун хыççăн рынок çĕнĕ условисене хăнăхĕ. Пичет вара справка чăнлăхне çирĕплетекен пĕртен-пĕр паллă пулнă. Халĕ суя справкăсем хатĕрлесси те палăрма пултарать. Страхлакан компанисем вара инспекцие запроссем ярса справкăсен чăнлăхне тĕрĕслеме тытăнĕç. Клиентсемшĕн нимĕнле çăмăллăх та палăрмасть – вĕсен компани хурав илессе кĕтмелле пулĕ.

**Иван БУРАНОВ.**

Саламлатпăр



Хисеплĕ те юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçие, хуньăма, хăтана, çывăх тăванăмăра – Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Федот Васильевич ВАСИЛЬЕВА** 85 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Турри сана вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр. Мăшăру, ачусем, мăнукусем сана яланах савăнăçпа телей, савăк кăмăл парнелеччĕр.

**Салампа: мăшăрĕ, 5 ывăлĕпе кинĕсем, хĕрĕ, 9 мăнукĕ, 3 кĕçĕн мăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем, мĕн пур тăванĕсем.**



Хисеплĕрен те хисеплĕ ĕçтешĕмĕре, çывăх юлташа – Малиновка ялĕнче пурăнакан, Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта математикăна вĕрентекен **Людмила Аркадьевна ФЕДОРОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр. Ĕмĕрӳ шурă пир пек вăрăм, пурнăçу хушпу кĕмĕлĕ пек çутă, сывлăху юман пек çирĕп пулччăр, чир-чĕр сирĕнтен пăрăнса çӳретĕр.

Чи илемлĕ сăмахсем калатпăр
Чĕререн сире сума суса.
Ырлăх-сывлăх, телей çеç сунатпăр,
Пурăнсамăр ĕмĕр савăнса.

**Саламласа Тойкилтĕ шкулĕн коллективĕ.**



Юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçие – Çĕньял Апаш ялĕнче пурăнакан, апрелĕн 9-мĕшĕнче 80 çулхи юбилейне паллă тунă **Николай Данилович ДАНИЛОВА** пĕтĕм кăмăлтан ăшă туйăмсемпе саламлатпăр. Сана юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул сунатпăр. Эпир сана хисеплетпĕр, юрататпăр, пире татах нумай çул савăнтарса пурăнма Турри пиллĕх патăр сана.

**Пысăк салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем çемйисемпе, кĕçĕн мăнукĕсем, хăтисемпе тăхлачисем тата тăванĕсем.**

Юратнă мăшăра, хисеплĕ аннене, кăмăллă асаннене, тараватлă тăвана – Çармăçкасси ялĕнче пурăнакан **Галина Герасимовна ХЛЕБКОВĂНА** 71 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул сунатпăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана тата нумай çул усратăр. Эпир сана çав тери хисеплетпĕр, юрататпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем.**



Оринин ял тăрăхĕнчи Патаккасси ялĕнче пурăнакансене – пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăрсене – хĕрĕме **Надежда Радомировна СОЛОВЬЕВĂНА** 30 çул тултарнă ятпа тата кĕрӳве **Эдуард Владисович СОЛОВЬЕВА** çуралнă кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.

Тулăх пултăр пурнăç сирĕн ялан,
Сывлăх ан хавшатăр нихăçан,
Ыр сунатпăр сире кăмăлтан,
Эсир хаклă ылтăнран.

**Саламлаканĕсем: ашшĕ-амăшĕсем, ачисем, çывăх тăванĕсем.**

Çĕнĕ юрă

# Тăван кил

**Музыкипе сăвви Любовь Щукинан**




Атте-анне килĕ – тăван кил,
Нихăçан ан сӳнтĕр кил ăшши,
Атте-анне пурри – чун туртни,
Вĕсене курасси – чи хакли.

Атте-анне килне чун туртать,
Вĕсене курасшăн ăш çунать.
Пĕр-пĕринпе курса калаçсан
Тăванĕсен кăмăл уçăлать.

Атте-анне килне каясси
Нихăçан ан пултăр юлашки.
Юрă-сăвă, халап каласа
Пултăр савăнăç çак кил-çуртра.

Атте-анне килĕ – тăван кил,
Пурăнасчĕ ĕмĕр савăнса.
Атте-анне пурри – чун туртни,
Вĕсене курасси – чи хакли.

# «Пĕчченлĕхпе кичемлĕх мана валли мар»

Иксĕлми пултарулăх

Илемлĕ тум тăхăнннă Кристина тĕкĕр умĕнче савăк кĕвĕ çеммипе ăста ташăç евĕр вăр-вăр çаврăнать, тĕрлĕ хускану тăвать. Пӳлĕмре пĕр самантлăха хуçаланнă кĕвĕçемĕ самантне унăн хăюллă сăмахĕсем татрĕç.

– Апрель уйăхĕнче Шупашкар хулинче пысăк гала-концерт пулать вĕт, эпĕ çӳрекен «Тантăш» ушкăн унта хутшăнма тивĕçрĕ. Çавăнпа та кăшт пушă вăхăт тупăнсанах тĕрлĕ ташă хусканăвĕсене тăватăп. Хамăр пултарулăха кăтартма Мускав хулине те çитнĕччĕ эпир, халĕ те аптрамăпăр-ха, – терĕ Кристина хавхаланнуллăн.



Палăртма кăмăллă, хĕр ачан ăсталăхĕ вĕççĕрхĕрсĕр. Акă сĕтел тата çӳлĕк çинче вăл ăсталанă тĕрлĕ эреш, илем вырăн тупнă: çыхни, тĕрлени тата ытти. Вĕсене кашнинех чĕрĕлĕх сĕмĕ кĕртме тăрăшнă вăл. Кристина ăсталанă япаласене район тата ун тулашĕнче иртекен тĕрлĕ куравсенче асăрхама пулать. Çавăн пекех вăл эрешсене парнелеме те кăмăллать, харпăр хăй ăсталани пахарах вĕт.

Тĕрлĕ енлĕ аталаннă, Çатракасси ял тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ Кристина Павлова спортпа та питĕ туслă. Вăл икĕ çул Адлер хулинче иртнĕ ăмăртăва хутшăнчĕ, шашкăлла выляса пĕрремĕш тата виççĕмĕш вырăнсене çĕнсе илме пултарчĕ. Ăçтан-ха черченкĕ хĕр ачара çавăн чухлĕ пултарулăх тесе кăсăклантăм эпĕ.

– Пĕчченлĕхпе кичемлĕх мана валли мар. Çавăнпа та эпĕ тăтăшах хама валли тĕрлĕ çĕнĕлĕх тупатăп. Шашка вăййин туртăмĕ аттерен, ытти вара йăлтах аннерен, – терĕ хăюллăн Кристина.

Пултаруллă хĕр ача вĕренӳре те питĕ ăста, вăл Шупашкар хулинче вырнаçнă куç япăх куракан ачасен ятарлă шкулĕнче пĕлӳ пухать. Шкулта хăй тытăмлăх мелĕ ĕçлет, Кристина – вĕрентӳ ĕçĕн министрĕ. Вăл хутшăннипе кунта «Стремление» ятарлă хаçат кăлараççĕ.

Тăрăшулăха, пур енлĕ ăсталăха вара ответлă ĕçченсем асăрхамасăр хăвармаççех. Раççейри куç курманнисен районти обществăлла организацийĕ сĕннипе тата пулăшнипе кăçал Кристина Чăваш Республикин Президенчĕн стипендине илме тивĕçрĕ. Халĕ вара вăл аслă пурнăç çулĕ çине тухма хатĕрленет. Пултаруллă хĕр ачана малашне татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума çирĕп сывлăх сунар.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Налук инспекцийĕнче

## Уçă алăксен кунĕ

Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ апрелĕн 20-мĕшĕпе 21-мĕшĕнче налук тӳлекен уйрăм çынсем валли уçă алăксен кунне йĕркелет. Унта хутшăнакансем 2012 çулхи деклараци кампанийĕ пирки тĕплĕнрех пĕлме, ку енĕпе практикăлла сĕнӳсем илме пултарĕç. Кирлĕ документсемпе сведенисем пулсан кунтах налук декларацине пама май пулĕ.

Уçă алăксен кунĕ апрелĕн 20-мĕшĕнче 9 сехетрен тытăнса 20 сехетчен, апрелĕн 21-мĕшĕнче 9 сехетрен тытăнса 18 сехетчен иртет.

Прокуратурăра

## Вут-çулăм инкек ан кӳтĕр

Район прокуратури чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарас, вăрмансене вут-çулăмран сыхлас, ăна хирĕç кĕрешес ĕç-хĕл епле пынине тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслев вăхăтĕнче Москакасси, Оринин, Юнкă, Катькас ял тăрăхĕсенче тата Ильинка лесничествин территорийĕнче пулнă.

Москакасси, Оринин, Катькас ял тăрăхĕсенче вут-çулăма хирĕç кĕрешме мотопомпăсем çителĕксĕррине, çавăн пекех ку тĕлĕшри хăш-пĕр документа йĕркелесе çитерменнине тупса палăртнă. Катькас, Юнкă ял тăрăхĕсенче тата Ильинка лесничествинче вăрман лаптăкĕпе çыхăннă хăш-пĕр ĕç-хĕл пирки калаçса татăлман.

Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕпе 4 асăрхаттару тăратнă, Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕ тĕлĕшпе административлă ĕç пуçарнă.

**А. ЧЕРНОВ,**
**район прокурорĕн пулăшуçи.**

Спорт

## Теннисла выляма

Спартакиада шучĕпе апрелĕн 14-мĕшĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче теннисла выляссипе район чемпионачĕ иртет.

Командăра 2 арçынпа 1 хĕрарăм пулмалла, ăмăрту 10 сехетре пуçланать. **Хамăр инф.**

Следстви комитетĕнчен

## Ыйтăвăрсем тимлĕхсĕр юлмĕç

Апрелĕн 4-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следствин тĕп пайĕнче Муркаш, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне район хаçачĕсен представителĕсем хутшăннипе брифинг иртрĕ. Ăна асăннă пай ертӳçи, юстици майорĕ Е. Виссаров ертсе пычĕ. Вăл çулталăк ĕçне пĕтĕмлетнĕ май кашни район ĕç-хĕлне уйрăммăн тишкерчĕ.

Сакăр çынран тăракан следстви пайĕ тăватă района пĕрлештерет. Çулталăк кăна каялла йĕркеленĕ çĕнĕ органра ĕçлекенсен вăтам ӳсĕм кăтартăвĕ çирĕм виçĕ çул, апла пулсан çамрăк ĕçченсен ĕçлес кăмăлĕ те пысăк. Следстви комитетне çынсем тĕрлĕ преступленипе çыхăннă ыйтусемпе килеççĕ. Вĕсене çыннăн ĕç правине хĕсĕрлени тата ытти саккунсăрлăх пăшăрхантарать. Пай ĕçченĕсем пĕтĕмпе 795 ыйту-çăхав йышăннă, вĕсенчен пĕри те тимлĕхсĕр юлман.

Пай следователĕсем РФ УПК 144, 145 статьясенчи йĕркесене пăхăнманнипе тата ытти преступленисемпе ĕçлеççĕ. Преступленисен йывăрăшне кура ултă уйăх е ытларах та тимлеме тивет. Пай следователĕсем çак преступленисемпе ĕçленĕ: çынна вĕлерни – 9, пĕлсе тăрсах çын сывлăхне сиен кӳнĕ, вĕлернĕ – 1, мăшкăллани е çакăн йышши ытти преступлени – 9, çул çитменнисем тунă преступлени – 3, çул çитменнисемпе çыхăннă преступлени – 6, коррупципе çыхăнни – 6.

Иртнĕ çул саккуна сĕмсĕррĕн пăснă çичĕ çын тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă, вĕсем 1537000 тенкĕлĕх тăкак кӳнĕ. Акă Ярославка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. Пайгусов тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе чылай вăхăт иртнĕ. Çавăн пекех Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Суриков РФ УК 285, 160, 292 статйисене пăхăнман, уголовлă ĕçе тишкерсе прокуратурăна тăратнă. Çавăн пекех ытти чылай ыйтăва тишкернĕ брифинг вăхăтĕнче.

Етĕрнере вырнаçнă пай ертӳçи Е. Виссаров халăха тĕрлĕ ыйтупа йышăнать, 2-22-28 номерпе шăнкăравлама пулать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Асăрханулăх тата тимлĕх

Тĕрлĕ ĕç-хĕл пурнăçлама чылай чухне пире укçатенкĕ çитсе пымасть, çавна май кредит илме тивет. Анчах та çакăн пек пысăк утăм тăвиччен тĕплĕн шухăшласа, ыттисемпе канашласа пăхмалла, унсăрăн улталанма та пулать. Кредит иличчен чи малтан хăвăр суйласа илнĕ организаци тата унăн условийĕсем пирки тĕплĕн пĕлмелле. Ală пусма ан васкăр, чи малтан килĕшӳпе тĕплĕн паллашăр. Ăнланман вырăнсем пулсан банк сотрудникĕнчен ыйтма ан именĕр, вăл сире ăнлантарма тивĕç. Кредит илме пулать-ха, анчах ăна тӳлесси вара çăмăл мар, çавăнпа та укçа-тенкĕне каялла тӳлес тапхăр, калăпăш, ставка виçи пирки ыйтăр. Ан манăр, банк картти урлă илнĕ кредит чи хаклă мел шутланать. Пурнăçа, сывлăха страхласси тивĕç мар, ирĕк. Кредитпа çыхăннă кирек епле документа та упрăр. Банк коммерци организацийĕ, çавăнпа та эсир вăхăтра тӳлейменнине каçармасть. Кредит тӳлессине вăхăтра пурнăçлăр, пĕр е ытларах кун тăсăлни сирĕншĕн пачах та мелле мар.

**«Роспотребнадзор» управленийĕ.**

# Шырав

2011 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕнче Москакассинчи Озерная урамри 2-мĕш çуртра пурăнакан Александр Изосимович Кабуркан килтен 19 сехет çурăра тухса кайнă та каялла таврăнман. Вăл ăçта пулнине халиччен те тупса палăртман. Çавăнпа та ăна курнă, асăрханă çынсене пулăшма ыйтатпăр.



Паллăсем: пăхсан 40–45 çулхи арçын, 170 см çӳллĕш, хытканрах кĕлеткеллĕ, куçĕ хăмăр, çӳçĕ кĕске тĕксĕм тĕслĕ, сылтăм хăлхи çинче суран вырăнĕ (шрам) пур.

Çухалнă кун вăл сăрă тĕслĕ «Адидас» тесе çырнă çăм калпак, хăмăр тĕслĕ тир хунă çухаллă тĕксĕм кăвак тĕслĕ пальто, хăмăр тĕслĕ урлă йĕрлĕ çăм свитер, шурă майка, шнуроклă сăран атă (берцы) тăхăннă пулнă.

Мĕнле те пулин хыпар пĕлтерме 02 е 8-965-683-20-18 номерсемпе шăнкăравлăр.

**Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕ.**


Пĕлтерӳсем. Объявления

**Иккĕ пăрулана хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-46-69.**

* * *

**Продаю двухкомнатную квартиру в новом доме по ул. Парковая в с. Моргауши.**
**Тел.: 8-927-853-54-21, 8-927-853-54-28.**

* * *

**Магазин «Сельхоззапчасти» реализует: запасные части к тракторам и сельхозагрегатам. Адрес: д. Юнгапоси. Тел.: 8-937-372-02-15, 8-927-859-69-93. 3-16.**

* * *

**Куплю 2 прицепа 2ПТС-4, б/у.**
**Звонить по тел.: 8-906-38-88-000, 8-905-029-65-79. 2-2.**

* * *

**ЗАО «МСО «Моргаушская» приглашает на соревнование по волейболу среди мужских команд Моргаушского района памяти Почетного строителя «Нечерноземагропромстроя» Н.А. Гусака на переходящий кубок ЗАО «МСО «Моргаушская», которое состоится 21 апреля 2012 года по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Юнгапоси, ул. Ягодная, д. 21. Начало в 10-00 часов.**

* * *

**Продаю дом с надворными постройками и земельным участком 0,15 га в с. Моргауши или меняю на квартиру. Тел.: 8-908-303-26-49.**

* * *

**Требуется менеджер по продажам.**
**Тел.: 8-927-861-55-73. 1-2.**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя, срок изготовления от 3 до 5 дней. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16А (здание котельной). Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-655-96-7. 2-3.**

**Мебель на заказ: диваны, кровати, шкафы, кухонные гарнитуры, стенки, прихожие, детская мебель. Кредит, рассрочка. Адрес: с. Моргауши, «Салон мебели» (напротив магазина «Визит»). Тел.: 8-900-330-72-60, 8-927-847-50-77. 8-10.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-10.**

**Магазин «ОТДЕЛОЧНИК» продает:**
**Цемент – 190 руб.**
**Утеплитель «РОКАЛИТ»**
**8,64 кв.м. – 580 руб.** 7-10.
**Доставка. Тел.: 8-903-322-59-69.**

ОКНА рамы
пластиковые, алюминиевые
входные и межкомнатные двери
салон продаж ПОТАП
Москитная сетка в подарок
Монтаж по ГОСТу
Гарантия 10 лет
Рассрочка



**Успей купить окна и двери по выгодным ценам!**
**тел.(8352)44-57-51, 8-919-663-09-55**


Прогноз погоды

| | среда 11 апреля | | | | четверг 12 апреля | | | | пятница 13 апреля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +2 | +4 | +7 | +5 | +3 | +7 | +12 | +9 | +7 | +11 | +12 | +11 |
| Давление мм | 745 | 743 | 744 | 746 | 746 | 747 | 747 | 745 | 742 | 738 | 735 | 733 |
| Влажность % | 95 | 97 | 96 | 94 | 97 | 94 | 80 | 89 | 92 | 93 | 97 | 82 |
| Ветер м/сек | 5 | 3 | 2 | 2 | 1 | 1 | 3 | 4 | 5 | 6 | 6 | 5 |
| | С-В | С-В | С | С-З | С | В | В | В | В | В | Ю | Ю |
| Солнце восход / заход | | 05:55 | 19:52 | | | 05:52 | 19:54 | | | 05:50 | 19:56 | |
| Луна восход / заход | | 01:13 | 08:35 | | | 02:05 | 09:44 | | | 02:43 | 10:59 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**

Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.

ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 10.04.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4633.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.